ЭКЗЕМПЛЯР


# Тăван

№ 37-38

Октябрь-ноябрь 2007 г.

Газета Тюменской областной организации «Ассоциация чувашей «Таван»


Поздравляем!

# С ПРАЗДНИКОМ!



**Дорогие друзья!**

**От всего сердца поздравляю всех тюменских учителей с профессиональным праздником!**

Именно благодаря учителям мы с уверенностью говорим, что школьные годы – самые чудесные в жизни.

Ваш нелегкий, но благородный труд ценился во все времена. Научить ребенка ответственности, любви к окружающим, расширить его кругозор - непростая задача. Своим уважением, вниманием к детям вы вносите большой вклад в счастливое будущее нашей страны.

Мы с вами заинтересованы в том, чтобы наши дети раскрыли свои таланты, реализовали свои возможности. Правительство области уделяет огромное внимание реализации приоритетного национального проекта «Образование». Открываются новые школы, закупается качественное оборудование, на помощь учителям приходят инновационные технологии и методики. Вместе мы сможем дать нашим детям качественное, отвечающее современным требованиям образование.

В этот прекрасный день желаю вам здоровья, профессиональных успехов и преданности своей профессии!

Пусть ученики вас всегда радуют!

*Губернатор Тюменской области*
*Владимир Якушев*

**1 октября – особый праздник для всех поколений.** Это напоминает о связи времен, которая не должна прерываться. На долю пожилых россиян выпало немало тяжелых трагических событий в истории государства. Они вынесли на своих плечах тяготы военного лихолетья. Ценой неимоверных усилий с честью выдержали все испытания, сумели защитить Отчизну и принести человечеству мир. В послевоенные годы, не щадя себя, восстановили народное хозяйство и возродили величие России.

Сегодня Тюменская область – один из самых благополучных регионов, где проживает более 300 тысяч пожилых людей. Несмотря на возраст, они молоды душой, пронесли через всю жизнь немеркнущие духовные и нравственные ценности, щедро передают свой богатейший жизненный опыт.

В канун Дня пожилых людей областная Дума приняла Закон «О ветеранах труда в Тюменской области». Согласно закону значительно расширился список лиц, имеющих право на получение статуса «Ветеран труда». Это лица, имеющие награды Тюменской области и длительный трудовой стаж.

В канун Международного Дня пожилых людей в АНОК «ДНК «Строитель» состоялся поздравительный концерт, где приняло участие руководство дворца, ветераны и коллективы художественной самодеятельности: ансамбль народной музыки «Сибирская забава», фольклорный ансамбль «Вересинка», театр казачьей



песни «Яр-хмель», ансамбль грузинского танца «Солнечная Грузия», ансамбль татарской песни «Чишма», ансамбль чувашской песни «Таван» и народный ансамбль русской песни «Сударушка».

По завершению концертной программы руководители национальных общественных объединений принесли свои поздравления с памятными сувенирами и подарками ветеранам. Любовь Павловна Шутихина, представитель ТООО «Ассоциация чувашей «Таван», с особым почтением вручила ветеранам подарки и сказала самые теплые и искренние слова благодарности и уважения в адрес тех, кто воевал, приближал День Победы в тылу, творил историю страны и края, участвовал в социально-экономическом становлении и развитии области, внес огромный вклад в ее освоение и преобразование.

**Мы и сейчас чувствуем вашу помощь и поддержку, уважаемые ветераны. Вы остаетесь для молодежи примером надежности, выносливости, самоотверженного трудолюбия и оптимизма.**

**Желаем Вам долголетия, доброго здоровья, хорошего настроения и благополучия!**

*О. Антонова*




**Новости ЧНК**

ЧУВАШИ ВСЕХ СТРАН ОБЪЕДИНЯЙТЕСЬ

*Стр. 2*

**Выдающиеся люди**

ÇАПЛА ВĂЛ ВОЛКОВ ШКУЛĔ

*Стр. 3-4*

**Праздники**

КĔР ПУЯНЛĂХĔ

*Стр. 5*

**Ачасен страници**

ВОСПОМИНАНИЕ О ЛЕТНЕЙ ПОЕЗДКЕ

КРОССВОРД

*Стр. 6*

**Форум**

БЕСЕДЫ О МОЛОДЫХ И ТАЛАНТЛИВЫХ

**Событие года**

ДОМ ДРУЖБЫ НАРОДОВ

*Стр. 7*

**Наши земляки**

СКАЗАНИЕ О ПРОЖИТЫХ ГОДАХ

*Стр. 8*



# ÇАПЛА ВĂЛ ВОЛКОВ ШКУЛĔ

МАЛТАНЛАСА Геннадий Никандрович Волкова эпĕ лайăхах пĕлмен. Хаçат-журналта унăн произведенийĕсене, статьйисене курсан «ку ман ентеш, Елчĕксем-ха» тесе çеç алла вулама тытаттăм. Хам та сисмерĕм, анланмарăм – таруках тытканласа парахрĕç вĕсем. /Халĕ, чылай вăхăт иртнĕ хыççăн салтавне уçамлан анлантарма пултаратăп. Г.Н.Волков терминсем айне путнă тĕпчевçĕ пек кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте хитре сăмахсем шыракан çыравçă пек çырмасть. Вăл санпа калаçать, асламăшĕ пек, амăшĕ пек, ашшĕ пек, тус-юлташу пек. Калавĕ-и, наука статьи-и… Çырса калаçать./ Кайран, Чăваш наци конгресĕ ячĕпе Мускав чăвашĕсем патне пĕр-пĕр мероприятие кайнă чухне кашнинчех Мускавсенчен шăнкăравласа: «Манăн ентеш Волков пулать-и», - тесе ыйтаттăм, чĕнмен пулсан çиллĕн асăрхаттараттăм. Ара Мускаври чăвашсене чăмартакансенчен пĕри пулнă-çке Геннадий Никандрович. Мускаври мероприятисенче кашнинчех Волковпа перле ларса калаçма тăрăшаттăм. Геннадий Никандрович мана пĕринче: «Мероприятисем вăхăтĕнче тухса калаçакансен сăмахĕсене итлеме юратмастăп эпĕ. Официаллă сăмахсем… чунлăх туйăмĕ, чăн тĕрĕслĕх çукки пăшăрхантарать. Эсĕ вара ялан тĕлĕнтеретĕн. Итлекенсен чĕрине хускатса илетĕн», - тесе калаçăн епле çунатлантарса яначчĕ вăл мана.

2003 çулта Чĕмпĕрте чăваш Патриархĕн И.Я.Яковлевăн 155 çулхи юбилейне палла туна вăхăтри тĕл пулу хыççăн Г.Н.Волковпа иксĕмĕр хушшинчи лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Иван Яковлевича эпир, чăвашсем, кирлĕ пек хакламанни, чăвашлăх ĕçне Яковлевран тата хăмăр асанне-асаттесенчен пуçламалли çинчен питех те вирлĕн калаçнăччĕ Чĕмпĕрте ирттернĕ



«çавра сĕтел» хушшинчи тĕл пулура. Çаван чухне Геннадий Никандрович кăчăк туртса малтан ман, унтан Татьяна Николаевна Петрова профессора хайĕн патне пыма чĕнчĕ. «Татьяна Николаевна, ак ку ачана çатарласа тыт та ан яр. Костя пек çынсем кирлĕ пире этнопедагогикăра. Пуш параппан çапакансем мар – ĕç тăвакансем», - тесе калаçа хучĕ. Çак калаçу хыççăн каштах вăхăт иртсен Геннадий Никандрович Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ректорĕпе Г.Н.Григорьевпа пĕрле Волков ертсе пыракан этнопедагогикăн наука тĕпчев институчĕ йышне наука сотрудникĕ пулса ĕçлеме илчĕç. Тепĕр тесен, манăн пурнăç мĕн пĕчĕкренех этнопедагогикăпа çыхăннă темелле. /Манăн çеç-и, Г.Н.Волков калашле, кашни çын этнопедагогика витçмĕпе çуралать, ачалăхне ирттерет, ӳсет, çын пулать/. Хай вăхăтĕнче Социализмлă Ĕç Геройĕ пулма тăратнă, анчах та ахаль колхозница пулнăран çак наградăран пăрса хăварнă асанне – Ирина Николаевна Портнова ракпа чирлесе ӳкнĕ хыççăн выранпа выртнă чухне эпĕ, ултăри пĕчĕк ача, самала пек çыпçанса ларса унпа чăрăнмасăр пĕлми калаçни çеç мĕне тарать. Е шкулта «Ялти çынсен паллă каларăшĕсемпе афоризмĕсем» ятлă алăпа çырнă кĕнеке каларма пăхни тата. Шел, пĕр учитель ăна манран туртса илсе çурса парахнăччĕ. Ара, унта ял çыннисем ун пирки мĕн калани́не çырнăччĕ эпĕ. «Эрех ĕçе-ĕçех ăсне ĕçсе ярать ĕнтĕ». Тепĕр учитель кашни виç сăмах хыççăн «Понимаешь» тетчĕ. Ун пирки çыннисем «Понимаеш килет» тесе çырса историе хăварма пăхни те



килĕшмен курăнать. «Тĕнчипе паллă çынсен каларăшĕсене пухмалла. Эсĕ ав ялти никам пĕлмен, пикам палламан çынсен сăмахĕсене афоризм выранне хурса лапартататăн. Хаçан ăс кĕрĕ сана?» - тесе варçнăччĕ мана çав учитель. Тен, çав хам пухна ал çырури ялти Ваçлей мучи «Çĕр çинче ĕçлеме ютшăнакансем хулана çамал еç шырама тараççĕ», «Ĕçлесрен хăраса кĕнеке вулаççĕ» тенисем тĕрĕсех пулчĕç-ши?! Çук паллах.

Этнопедагогикăпа мĕн пĕчĕкренех туслашма тăрăшнă тенĕрен – Елчĕк район хаçатĕнче ĕçленĕ чухне хам çамрăк пулин те воспитани темипе ятарлă рубрика тытса пырса тăтăшах статьясем пичетленине епле манăн тата. Кашни статья тухмассерен редакцири «ватăсем» мана аксакал тесе тĕрте-тĕрте илетчĕç. Анчах та эпĕ унта çĕннине нимĕн те çырман – ваттисемпе çамрăксен хушшинчи хутшăнусене çеç илсе кăтартаттăм. Несĕльсен ăс-танĕ – çамрăксен малашлăхĕ. Этнопедагогикăн принципĕ мар-и?

Геннадий Никандровича мана тĕлĕнтерекенни – вăл яланах çĕнĕ шухăш калани. Тĕл пулура ларса ăна итлетĕн-и е халь çеç пичетлесе кăларнă кĕнекине е пичетленсе тухнă статьине вулатăн-и – кашнинчех çĕннипе пуянланатăн: тĕнче çине урăхларах пăхма, япаласемпе пулăмсене урăхларах хаклама пуçлатăн, çĕнĕ, ыра туйăмсемпе хавхаланса кайса халь-халь тусене йăвантарма хатĕр пек туятăн. Тепĕр чухне хайĕн ĕçĕпе çыхăнман, вăл енĕпе специалист пулман ĕç-пулăмсем пирки те калаçса тĕлĕнтерет вăл. Калани çеç-и, çĕнĕ шухăш сĕнсе пурне те парантарать.



Ака пирĕн çĕршывра ял хуçалăхĕ кирлĕ пек аталанмасть. Çаканшăн тем те тăваççĕ пек. Г.Н.Волковăн хресченсем çинчен калакан статйине вулатăн та çĕр ĕçĕн анаçлăхĕ, малашлăхĕ уçамлăн куç умне тухса тăрать. «Ял çыннин обществăри выранне пĕчĕклетсе кăтартатпăр эпир. Вăл хула çыннипе пĕр тан çеç мар, унран та маларах тăракан субъект», - тет Г.Н.Волков. Тĕрĕс мар-и вăра çака? Ял çынни универсал, пур ĕçе те тума пултарать, вăл хула çыннинчен ĕçпе те, нуша-тертпе те ытларах пиçĕхнĕ çын. Кирек хăш отрасле ил – унта малта пыракансен, тĕслĕх кăтартакансен пысăк пайĕ ялтан тухнă çынсем. Ял çынни çине пăхакан психологие улăштармалла, ака, ял хуçалăхĕн ӳсĕмлĕ аталанăвĕ – çапла Г.Н.Волковăн шухăшĕ.

Тепĕр тесен çакна эпĕ хам çинче те тĕрĕслесе пăхнă. Харсăр чăваш Владислав Никитин ертсе пыракан «Агросоюз» пĕрлешĕве Елчĕк районĕнче çĕр пачăр тесе калаçма пĕрле кайнăччĕ. Районта юлса пыракан «Луч» колхоз ĕçченĕсем пĕрлешӳ йышне кĕме пулчĕç мана вăра, Никитиншăн агитацилеме кайнă çынна, тытрĕç те çĕнĕрен йĕркеленнĕ «Урожай» агрофирма директорĕ пулма сӳйласа лартрĕç. «Агросоюзпа» ĕçлеме лайăх пулать тесе шантаратăн ху, пурте шантараççĕ, ылтăн тусем сĕнеççĕ, çирĕплетсе пар-ха шантарнине хăвăх терĕç те – эпĕ тем пек хирĕçленине пăхмасăр мана илтесшĕн те пулмарĕç. «Юрать, çулталăк ĕçлетĕп те каятăп», - тесе килĕшрĕм. Ĕненме те йывăр – çулталăк хушшинче, çĕршыв Президенчĕ В.Путин калашле, хуçалăхри çынсен «куçĕсем çиçме» пуçларĕç. Мĕншĕн? Г.Н.Волков калана пек ял çынни патне психологи тенине улăштарнине пула. Чăваш Республикинче пулман япала – 50 гектар çинче хаяр акрăмăр. Районти ял хуçалăх управленийĕ пуçлăхĕ В.Свеклов çаканшăн ятласа та илчĕ: «Мĕн аташатăн эсĕ? 1-3 гектар хаяр акса та ăна çитĕнтерес, çумлас, пухса илес тесе колхозсем нуша-терте кĕрсе ӳкетчĕç. Эсĕ вара, 5 те мар, 10 та мар, 20 те мар, 50 гектар пирки калаçатăн!» Анчах та çав 50 гектар çинче çум курăк та алхасмарĕ, тухăçĕ те аван пулчĕ, хаярне те вăхăтра тиесе ятăмăр. Хаяртан илнĕ тăса тупăш çеç икĕ миллион тенкĕ ытла пулчĕ. Мĕнле майпа? Кашни ял çыннипе тăван атте-аннепе калаçнă пек калаçрăм, çемьере, килте мĕн пулăшмалли пур – пулăшма тăрăшрăм. Ĕç укçине вăра ĕçленине кура хаклăса ĕçленĕ хыççăнах, эрнерен туллин чĕрĕ укçăллă пăрса пытăмăр. Ятарласа «Тухăçлă хаяршăн» хаçат кăларса ял çыннисене мухтарăмăр, наянсене чĕпĕтрĕмĕр. Паллă артистсем нихçан пулман клубра ял халăхĕ спектакль, концерт курса савăнчĕ. Кăм тăрăшса та хавхаланса ĕçлеме çакăн пек лару-тăрура? Хам калана пекех çулталăкран кайрăм хуçалăхран. Шел, эпĕ хатĕрленĕ директор çумне лартмарĕç агрофирмăна ертсе пыма районта. Тем пек малашлăхлă хуçалăх саланчĕ. Тепĕр тесен çака та Г.Н.Волков сĕнекен шухăша тĕпе хуманнине пула. Хуçалăх тăвакан пысăк çитĕнусене район пуçлăхĕсем те, Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви те юри курманçи пулчĕç. Хуçалăха пырса ыра сăмах калакан, хавхалантаракан пулмарĕ. Çулталăк хушшинчех ял хуçалăхне çĕклеме май пурри хăратса парахнă, е кĕвĕçтернĕ пуль ĕнтĕ пуçлăхсене.

Г.Н.Волков хускатнă чун хăвалĕпе, вăл тăптаракан çĕнĕ шухăшсен çăл куçĕнчен ĕçлекен ăс-тăн мана Бичурин – Иакинф атте, Лев Толстой, А.С.Пушкин, Геннадий Айхи, Петĕр Хусанкай çине пачăх та урăхла куçпа пăхма хистерĕнĕ. Ульха хĕрĕмпе Л.Толстой произведенийĕсене, ĕçĕсене çĕнĕрен вулатпăр. Чăвашăх пулнă пуль вăл. Пĕтĕмпех чăвашла шухăшласа çырать вĕт! Л.Толстойăн ывалĕ пирки хăш-пĕр çĕрте чăваш композиторĕ тесе калани, çырни, тен, тĕрĕсех те пулĕ. Петĕр Хусанкайăн куçаравĕсем тата Геннадий Никандрович тĕрĕс калать. А.С.Пушкинăн произведенийĕсем Хусанкайăн чăвашла куçаравĕнче Пушкинăннинчен те вăйларах. Тытса вулăр, хăварах туйса ĕненетĕр.

Пĕр чăрăнми çырма хатĕр Геннадий Никандрович çинчен. Хут та, вăхăт та çитес çук Анчах та вăл юратмасть хайĕн çинчен калаçнине. Яланах ман çинчен мар, хăвăр çинчен калăр, хăвăр çинчен калаçса парăр. Ку вăра ман çинчен калана пекех пулĕ. Мана савăнтарĕ, чуна лăплантарĕ те çĕклентерĕ», - тет. Ара, çапла пулмарĕ-и? Геннадий Никандрович çинчен çырасшăнччĕ. Пулмарĕ, хаман пурнăçăм витĕр çеç утса тухрăм. Çапла вăл Волков. Çапла вăл Волков шкулĕ! Юрату та тĕслĕх!

*Константин Портнов*